Гаврилов И. К.В. Иванов çуралнăранпа 50 çул çитнине уявланă кунсенче каланă саламлă сăмах / Р. Петрова куçарнă // Тăрă çăлкуçсен кĕввисем. – Шупашкар, 1993. – С. 85-86; Пике. – 1997. – № 7-8. – С. 14.

Кузебай ГЕРД

## ЧĂВАШ СĂВĂÇĔСЕНЕ

**Эпир, вотяк поэчĕсем, пусмăр тÿссе пурăннă халăхсен литератури, унăн тĕрлĕ тĕсĕсем епле çуралса аталанса пынипе питĕ интересленетпĕр. Çак тĕллевпе вотяк литераторĕсем, ку шутра эпĕ те, ытти халăхсен сăвăçĕсемпе çыру çÿрететпĕр, шухăшăмăрсене пĕлтерсех тăратпăр, сăвă пуххисене пĕр-пĕрин патне ярса паратпăр, литература ĕçĕ-хĕлĕ мĕнле пыни çинчен пĕр-пĕрне хыпарлатпăр.**

**Çапла майпа эпĕ хам паллă вырăс, финн, латыш, белорус, пушкăрт, зырян тата ытти халăхсен поэчĕсемпе çыхăну йĕркелерĕм, анчах чăваш сăвăçĕсемпе паянччен çыхăнаймарăм.**

**Акă халь çак çырăва сирĕн урлă пултаруллă чăваш поэчĕсемпе çыхăну тытма пуçлас тĕллевпе çыратăп. Эсир ман ыйтăва пурнăçлама килĕшессе шанатăп, палăртса каласан, кампа çыру çÿретме май пуррине кăтартасса е ăна çак çырăва парасса кĕтетĕп, мĕншĕн тесен эпĕ нихăш поэт адресне те пĕлместĕп.**

**Сăмах май каласан, эпĕ «Нарспи» авторĕпе çыхăнаттăм, йĕркисене вырăсла куçарса çырнă кĕнекине ярса пама ыйтăттăм.**

**Ылмаштарас шутпа хам çырнă сăвăсен пуххине ярса парăттăм. Эсир ман ыйтăва тивĕçтерессе шанатăп.**

**Сире хисеплесе вотяк поэчĕ**
**К. ГЕРД.**

***(Чувашский край», 1922 çул), çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕ.***



Игнатий ГАВРИЛОВ

## К. И. ИВАНОВ ÇУРАЛНĂРАНПА 50 ÇУЛ ÇИТНИНЕ УЯВЛАНĂ КУНСЕНЧЕ КАЛАНĂ САЛАМЛĂ СĂМАХ

Çĕнелсе вăй илнĕ телейлĕ удмурт халăхĕ халь тин кăна мăнаçлă ята — «чăн-чăн этем» тесе калама тивĕçлĕ пулнă халăха — тăванла чăваш халăхне — хĕрÿллĕ салам калама ыйтрĕ.

Чăваш çыравçисене, чăваш халăхĕн юратнă К. В. Иванов традицийĕсене малалла тăсса пыракансене удмурт çыравçисенчен салам!

Хаклă юлташсем, истори пушкăрт, тутар, удмурт, чăваш, çармăс, мордва (ирçе) халăхĕсен ĕмĕрхи туслăхĕ çинчен калакан ылтăн страницăсене упрать. Çак таса та чаплă туслăх алла хĕç тытса Емельян Пугачев ертсе пынипе йĕркеленнĕ отрядсенчен пĕрле çапăçнă кунсенче те çирĕпленнĕ.

Удмурт халăхĕн ахах пек çиçсе тăракан сăмахлăхĕнче Пугачев вăхăтĕнче юрланă юрă упранса юлнă. Унта çакăн пек йĕркесем пур:

И стеною нерушимой
На бояр, попов пойдем.
И батырской силой вольной
Счастье мы в бою найдем.
Не одни мы будем в битве:
С нами братья в бой идут, —
И башкиры, и татары,
И чуваш с мордвой идут.

Çак йĕркесене удмурт халăхĕ тăванла халăхсем хушшинчи туслăх çинчен юрланисĕр пуçне хăй вырăс халăхне шутсăр юратни тата шанни çинчен те каланă. Патша çыннисен сĕмсĕр те хаяр ултавĕ пирĕн халăха вырăс халăхĕпе вăрçтараймарĕ, мĕншĕн тесен вырăс халăхĕн ăслă çыннисем Герценпа Короленкăран пуçласах хăйсене вилĕмлĕ суран лекессине пăхмасăр пĕр хăрамасăр Муравьевпа Плеве тата Победоносцев палач йышшисем удмуртпа вырăс халăхĕсене вăрçтарса ярасшăн тăснă тутăхнă çĕççисене хĕрхенмесĕр. Патша çыннисем, халăх сăмахĕпе каласан, Кама тата Атăл тăрăхĕнчи халăхсенчен йĕкĕлтесе кулнине Герцен «Былое и думы» кĕнекинче çав тери уçăмлăн çырса кăтартнă.

«Земский полицийĕн чăн-чăн мул», — çырнă Герцен, — вотяксем, мордва, чăвашсем... Вотяк ялĕпе çĕр виçекен пырать-и, — чарăнмасăр иртмест, астролябине (кĕтес виçмелли хатĕрне) урапа çинчен илет, сăнчăрне туртса карăнтарать. Пĕтĕм ял аптăраса ÿкет. «Çĕр виçекен, çĕр виçекен!» (мишемер), межемер — 1812 çулта «Француз! Француз» — тенĕ пек хăравçăллăн калаççĕ ял çыннисем. Çĕр виçевçи виçет те виçет. Староста пуç çапма пырать, улталаса ан виç тесе тилмĕрет. Çĕр виçевçи 20—30 тенкĕ ыйтать.

Исправникпа становой вилнĕ çын ÿтне тупаççĕ, çанталăк сиввипе усă курса икĕ эрне хушши пĕр вотяк ялĕнчен тепĕр вотяк ялне турттарса çÿреççĕ. Ку вилене сирĕн ял çумĕнче тупнă, судпа следстви сирĕн ялта пулать тесе хăратаççĕ удмуртсене. Вотяксем япала е укça парса хăтăлаççĕ».

Удмуртпа чăваш халăхĕсен шăпи пĕр пекех йывăр пулнă. Удмурт халăхĕ чăваш классикĕ Иванов поэмине вуласа хăй пурнăçне курчĕ. Вăл иртнĕ хуйхисуйхине, çутă ĕмĕтне тата çавăн пекех курайманлăх туйăмсене тепĕр хут аса илчĕ. Çынсем çамрăклăхне, телейне ним чиккине те пĕлмесĕр таптанă-çке.

Герцен çапах та каласа çитереймен. Пуç тайма кăна мар пĕлнĕ удмуртсем. Вĕсен курайманлăх туйăмĕ те пулнă. Çак курайманлăх вĕсене çапăçма та вĕрентнĕ. Легендарлă Чапаев тата Разин ертсе пынă çапăçусене удмуртсем те хутшăннă. Вĕсен паттăрлăхĕ удмурт историне асăнмалăх кĕрсе юлчĕ.

**Роза ПЕТРОВА куçарнă.**